# «ÇЫННА МАН ĔÇĔМ САВĂНТАРТĂР...»

***(Илле Тукташ сăвăç, прозаик, куçаруçă, Чăваш Республикин Гимнĕн авторĕ çуралнăранпа 110 çул çитнĕ май)***

Чăваш литературин, культурипе ӳнерĕн аталанăвĕнче Илле Тукташ сăвăçăн, прозаикăн, куçаруçăн, литература тĕпчевçин, фольклористăн тӳпи питĕ пысăк. Вăл çуралнăранпа çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче 110 çул çитрĕ. Вăл çырнă «Тăван çĕршыв» сăвва пĕлмен чăваш çук та пулĕ çĕр çинче.

*Çурхи тĕнче вăраннă чух:*
*Хаваслă кун шăраннă чух,*
*Чун савăнать: чĕре сикет,*
*Çĕршывăм çинчен юрлас килет.*

*Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,*
*Асран кайми юратнă çĕршыв.*
*Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,*
*Мухтав сана, çуралнă çĕршыв!*

Пирвайхи хут Илле Тукташ сăввисемпе Герман Лебедев кĕвĕленĕ «Тăван çĕршыв» юрă 1945 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Петр Осиповăн «Тăван çĕршыв» пьеси тăрăх лартнă спектакльте янăранă. Куракансем кĕвве ура çине тăрсах итленĕ, вăл кашнин чунне пырса тивнĕ, телейлĕ те мирлĕ пурнăç символĕ пулса тăнă. Тен, çавăнпа та пулĕ «Тăван çĕршыв» юрă «Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем çинчен» калакан законпа килĕшӳллĕн, ăна 1997 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă, Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ пулса тăнă.

Гимнăн кĕввипе сăмахĕсем чăваш халăх юррине çывăх, çав вăхăтрах унра хальхи самана таппи уççăн илтĕнет, унăн савăнăçлă та çĕкленӳллĕ сасси пирĕн чĕресенче мăнаçлăх çуратать. Патшалăх гимнĕн тексчĕ сăнарсен виçĕ ушкăнне пĕрлештерет: çутçанталăк чĕрĕлни; тăвансем, атте-анне, ача-пăча – çемье пĕрлĕхĕ; чăваш тĕнчинчи пĕтĕм халăх туслăхĕпе килĕшĕвĕ. Çапла вара «Тăван çĕршыв» юрă çыравçă пултарулăхĕнчи пысăк çитĕнӳ пулса тăчĕ.

Илья Семенович Тукташ 1907 çулхи çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралса ӳснĕ.

Тăван ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн 1918-1919 çулсенче Ураскилтри шкулта, Элĕкри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Пиччĕшĕ 1923 çулта Граждан вăрçинчен таврăнсан çамрăк Илле Хĕрлĕ Чутайри шкулăн иккĕмĕш сыпăкĕнче вĕренме тытăннă, унта ăна комсомола илнĕ. 1924 çулта вăл Ураскилтре ачасене вĕрентме пуçлать. 1925 çулта пĕр хушă Атикасси вулăсĕнчи комсомол организаторĕ пулса ĕçлет. 1926-1928 çулсенче Шупашкарти партипе совет шкулĕнче вĕренет. 1931-1933 çулсенче Илле Тукташ, ун чух ĕнтĕ паллă поэт, Самарти геологипе разведка институтĕнче вĕренет, пĕр вăхăтрах чăвашла тухса тăракан «Колхозник» хаçатра яваплă секретарьте вăй хурать. «Вăтам Атăл» альманах кăларса ĕçе хастар хутшăнать. Çак вăхăтра унпа пĕрле В.Иванов-Паймен, Исаев Мĕтри, И.Викторов, Стихван Шавли тата ытти çыравçăсем те ĕçленĕ.

Тĕрлĕ çулсенче вăл Элĕк вулăсĕнчи комсомол комитетĕнче, «Хатĕр пул» журналăн тата «Çамрăк хресчен» хаçатăн яваплă секретарĕ, ялти шкул учителĕ, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулса ĕçлет. 1935-1942 çулсенче, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине кайиччен, Илья Семенович Шупашкарти наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕ пулса тăрăшать. Вăл халăх сăмахлăхне тĕпченĕ, сăввиюррисемпе юмах-халапĕсене пухса кăларнă: «Ача-пăча юмахĕсем» (1938), «Чăваш фольклорĕ» (1941,1949); вĕсем çинчен статьясем çырнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче Илле Тукташ дивизи хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ, çар корреспонденчĕ пулнă. Вăрçăран вăл йывăр чирлесе килнĕ. Каярах Чăваш писателĕсен союзĕн правленин председателĕ пулса ĕçлет.

Илле Тукташ чăваш литературин тĕнчине «Курасса эп шутламанччĕ» сăвăпа килсе кĕнĕ. Сăвă 1927 çулта «Çамрăк хресчен» хаçатра чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнă, ун чухне поэт çирĕмре кăна пулнă. Сăвăра Тукташ çĕнĕ самана халăха ирĕк пани, ăна пĕрлештерни çинчен хумханса çырать. Унтанпа çак сăвă пĕрре те пичетленмен.

*Курасса эп*
*Шутламанччĕ*
*Çакă сутă кунсене!*
*Паян вуннă...*
*Чĕрем манчĕ*



*Иртнĕ йывăр çулсене.*
*Эпир пурте*
*Астăватпăр*
*Аслă Юпа çулăмне;*
*Тĕреклĕнех*
*Халь шăватпăр*
*Вунă çулăн çулăмне <...>*
*Паян халĕ*
*Пур ĕç халăх*
*Карах тухрĕç урама,*
*Вунă çулхи*
*Çут Юпашăн*
*Ирĕк юрри юрлама.*
*Çамрăк чунăм,*
*Эс те савăн,*
*Вирлĕрех тап эс, чĕре!*
*Вунă çулшăн*
*Вылян, юнăм,*
*Тĕплĕнех халь, эс вĕре!*
*(«Курасса эп шутламанччĕ», 1927).*

Литературăри хушаматне вăл хăйĕн тăван ялĕн ятĕнчен илет – Тукташ. Çапах та тĕрлĕ çулсенче вăл И. С-ов, Эрнер Элли, И. Семенов, И.Илсемен тата ытти псевдонимпа тĕрлĕ хайлавсем пичетлет. Çамрăк çыравçăн кашни сăввиех вулакана тыткăнланă. Хайлавĕсенче вăл тавралăха урăхла курма, унăн илемлĕхне туйма пĕлни сисĕнет, сăмаха тӳррĕн калани паларать.

1931 çулта Илле Тукташ çырнă «Вăкăр çырми» повĕçе вулакан питĕ ăшшăн йышăннă. Вăл «Трактор», чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕн литература, критика, политика альманахĕн 2-мĕш кĕнекинче кун çути курнă. Унта вăл хăй кусĕпе колхозсем тăвас анлă юхăм тапранса кайнине сăнать. Часах хайлав чăваш классики шутне кĕнĕ. Колхозлă ял пурнăçĕ çинчен калакан произведенисем – сăвăсем, калавсем, очерксем – И. Тукташ каярах та сахал мар çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем: «Çĕр хуçисем» (1954, 1982), «Сăвăсемпе юрăсем» (1958).

1930 çулта Чăваш кĕнеке уйрăмĕнче Нестер Янкаспа тата Уйăп Мишшипе пĕрле Илле Тукташ сăввисен пуххине пичетлесе кăларнă. Вулакан çакăнтан асăрханă пултаруллă çамрăк çыравçа, кашни çĕнĕ хайлавĕ пичетленсе тухмассерен Тукташ чапĕ халăхра ӳссех пынă.

Çыравçăн пĕрремĕш сăввисемпе поэмисен уйрăм кĕнеки 1932 çулта «Октябрь çилĕ» ятпа Вăтам Атăл крайĕнчи патшалăх издательствинче (Самар; Мускав) кун çути курнă. Кĕнекене кĕнĕ сăвăсем вулакана романтикăлăхпа, çĕкленӳлĕхпе, хăйеврĕлĕхпе тыткăнласçĕ, вĕсенче çĕнĕ пурнăç сăнланать, хавхаланулла туйăм паларать.

Пултаруллă лирик халăх юррисем майлă чылай сăвă çырнă. Сăввисенче халăх кун-çулне, шухăш-кăмăлне, кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе уявĕ-сайлавне, савăнăçĕпе хуйхи-суйхине йĕрлеме пулать, сăвăç тăван çĕршыва, тăван тавралăхпа унăн илемне мухтаса юрлани уççăнах илтĕнет:

*Чăваш кĕвви çĕр хĕрĕх сумлă,*
*Чуна çĕклет янравлă сас.*
*Савни паян вĕр-çĕнĕ тумлă,*
*Чĕрийĕ ун юрра хавас.*
*Тăван кĕсле тăсать çĕн юрă,*
*Сасси те ун салхуллă мар.*
*Савни чĕри текех хĕн-хурăн*
*Парни пулмашкăн тивĕç мар...*
*Кĕсле çемми – тивлетлĕ çемĕ*
*Илем кӳрет тӳлек ире...*
*Савни, итле: юратнăçемĕн*
*Асап пусаймĕ тек пире!*
*(«Чăваш кĕвви çĕр хĕрĕх сумлă...», 1927)*

**(Вĕçĕ пулать.)**

**Галина СОЛОВЬЕВА.**
Чăваш Республикин Наци библиотекин «Чăваш кĕнеки» центрĕн ертӳçи.